

# Яков УХСАЙ: «Поэзисĕр ман пурнăç çук...»

**Кун кĕнекинчен**

**Мартăн 1-мĕшĕ.** Тăвата уйăх иртнĕ хыççăн «Чĕмпĕр» поэмăна тепĕр хут тытрăм. «Хăвна пăхăнтарма вĕренĕр» (Пушкин). «Ĕçлени ывăнтарать, ĕç хавхалантарать» (Д.И. Менделеев).

Кузнецова, Старшинов тата Ип.Иванов патне çырусем çыртăм.

**Мартăн 2-мĕшĕ.** «Хĕллехи каç курнă тĕлĕк». Малтан вăл «Icterus» ятлă пулнă. Эпĕ ун çинчен Юмана каласа параттăм та Дмитрий Петрович ăшне тытса кулатчĕ, куççулĕ тухатчĕ. Каярахри сюжетне эпĕ Твардовские темиçе хут та каласа панă.

**Мартăн 3-мĕшĕ.** Поэзи тетрачĕ. Блок. Çинçĕш, ырă янравлăх. 1. Росси («Разбойная краса». «Хурахла хитрелĕх»). 2. Паттăрлăх çинчен. 3. Чугун çул. Э.Багрицкий. 1. Кайăк тытакан. Ел.Ширман (1908) – сăввисем япăх. Икĕ еврей, виççĕ те. Еврейсем хăйсеннисене манмаççĕ. Паян Багрицкий çинчен иккĕмĕш хут, унăн Всеволод ывăлĕ çинчен те тата.

**Мартăн 5-мĕшĕ.** Петр Петрович Кончаловский. «Пулас çук ĕмĕтсем». 1876 çулта çуралнă. Париж академийĕ. Сезанн. Испани – «Вăкăрсен çапăçăвĕсем». Паллăраххи – «Сĕрме купăс калакан». 1924 – Итали пейзажĕсем. Горький. Чулхула пейзажĕсем. Уйрăмлăхсем. Хăйнешкел, таврăнми ытарайманлăх. 1927 – Кавказ. 30-мĕш çулсем – хула, Ленинград пейзажĕсем...

Пейзаж тата натюрморт. «Сирень». Чечексем – художниксен аслă вĕрентекенĕсем. Портретлă живопись. «Хĕрĕ – Наташа» (П.Васильев*). С.Прокофьев – композитор. Чăн-чăн пур тĕнче тата ăсра сăнарлакан тĕнче. А.Толстой сĕтел хушшинче кăнтăр апачĕ тăвать. В.Иванов, Мейерхольд, Фадеев, Тренев, Пушкин. Хавхалану самантĕнче. Лермонтов почта станцинче. «Буйволсене таканлани» картина. «Хĕрлĕ утлă çара шыва кĕртни».

**Мартăн 6-мĕшĕ.** Уборщица ĕçне хисепле. Чăваш кĕнеке издательстви, çыравçă ĕçне хисепле.

Пĕр намăссăр, хура ăш-чиклĕ поэт пекки, пĕр этемкке мана тăшман тесе ят пачĕ.

---

****Павел Васильев поэтпа Я.Ухсай Мускаврa 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче час-часах тĕл пулнă. Павел Васильев Кончаловский хĕрне Натальйăна юратнă, ăна халалласа «Наталья» сăвă çырнă.***

**Мартăн 7-мĕшĕ.** Пӳртре сивĕ. Радиора Николай Тихонов сасси. «Орда», «Брага» сăвăсен пуххисем. Сăвăçсене витĕм кӳни. Телеграф ăслайĕ. «Хамăр» поэма (1920). «Юрга» кĕнеке. «Кахети çинчен çырнă сăвăсем». «Юлташ мĕлки». Вĕрентекен. Лермонтов. «Грузири çуркунне».

**Мартăн 10-мĕшĕ.**

Хамăр Кĕçтентин пичче
Çырнă пек, уй-хирĕнче
Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Чăнах пăхма тесе пек
Çутă шывăн хĕррипе
Ларса тулнă Пишпулек
Улăм витнĕ пӳртсемпе.

«Хура çĕрпе хавас поэзи». Статья.

**Мартăн 12-мĕшĕ.** «Пушкăрт çĕршывĕ. Кунта пурте манăн»? Çăл – çăвăнатăп, пултăран – çиетĕп, кайăк – эпĕ унăн юррине итлетĕп. Манăн халĕ никам та çук. Савни те. Çĕрĕм пур.

«Кунта сивĕ, анчах сивви те ăшă». Геннадий Бор. «Пихтăсен пысăк вăрманĕсем», кĕнеке.

Лермонтов поэзийĕ музыкăра.

«Пĕччен парăс шуррăн курăнать». А.Варламов – Лермонтовпа пĕр вăхăтри. «Черкессен юррисем». А.Алябьев – Лермонтовпа пĕр вăхăтри. «Пĕлĕтсем», «Тунсăх та, хурлă та» – Даргомыжский.

«Лермонтовпа сывлатăп», – çырнă Балакирев Пятигорскран.

«Селиме юрри» («Измаил-бей» поэмăран) – Мясковский.

**Мартăн 13-мĕшĕ.** Çил-тăман. Юр хыртăм, арăма кĕтрĕм. Тем çитмест. Кун хушши пурăннине пĕр кунта кăтартмалла. «Хăйне евĕрлĕ лару-тăрури хăйне евĕрлисем».

Арăм килчĕ. «Новый мир» журналтан çыру илтĕм.

Тутар композиторĕсем – Саит Сайдашев, Музафаров – «Гелбану», Файзи – «Башмачки», Фарид Яруллин – «Шурале»... Александр Ключеров – «Кара Урман» (Тутар халăх артисчĕ Рашит Вагапов). Пушкăртсен легенди тăрăх Ключеров çырнă балет. Вăл тутар тата пушкăрт юррисене пухакан. Ăна Пушкăрт наукăпа тĕпчев институтĕнче тĕл пулнине астăватăп. Габоши. Насиб Жиганов – «Качкын», «Алтынсесь», «Джалиль». Джалиль арийĕ.

**Мартăн 15-мĕшĕ.** Слакпуç хĕр ачи – Спиридонова-Кĕтмел. Унăн поэми – «Ĕçлекен сасси».

Кирлеми – кирлĕ мар ĕç, япала.

Кĕтмел – брусника, клюква? Кĕтмел

## ара ырн

**Ман алăра пĕчĕкçĕ тĕксĕм симĕс блокнот. Унта пирĕн юратнă атте хăй аллипе, ытларах кăранташпа, йăвă та питĕ вĕтĕ çырнă йĕркесем. Вăхăт самаях иртнипе хăшпĕр сăмахсем шупкалнă, тĕссĕрленнĕ: вулама та ансат мар. Çыру кĕнекине Яков Гаврилович çур çул хушши, 1969 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа сентябрьччен, çырса пынă. Çырнă чухне тăхтавсем те пулкаланă, темиçе кунне пачах та çырман, сиктерсе хăварнă. Çав кунсенче атте икĕ хутчен Шупашкарта парти пухăвĕнче тата чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕн ларăвĕнче пулма ĕлкĕрнĕ. Советсен тапхăрĕнче пухусене çӳремесен хытă айăпланă-çке-ха. Унтан вара ялта пӳрт тума пуçланине пула Кăкшăмри пултарулăх çуртĕнче каннă, сентябрьте хăй ĕçĕсемпе пĕр эрнелĕхе Мускава кайса килнĕ.**

**Çак йĕркесене атте Куславкка районĕнчи Карачра çырнă. Кунта вăл уйăхĕ-уйăхĕпе пурăннă, нумай ĕçленĕ. Çӳллĕ мар маччаллă пĕчĕк пӳртре пĕтĕм Раççей тĕлĕнмелле пысăк хайлавсем шăрçаланă. Пĕчĕкçĕ йывăç çурта ятарласа ун валли лартнă пулнă.**

çырли. Слакпуçĕнче мĕн çырлине пĕлтерет?

Саврăшпуç юрри (Охотников). Улăхрăм çӳллĕ ту çине, лартăм шурă хут çине, лартăм çырла пиçиччен, кĕтрĕм аттен кĕттине.

Кĕтти? Кĕшĕл-кĕшĕл халăх.

Сергей Тимофеевич Коненков.

«Эпĕ художник, математик мар. Тĕрĕс формулăсем манран ан кĕтĕр».

Эпĕ чунран сума сăвакан çын тата художник Анна Семеновна Голубкина: «Енчен те сирĕн мĕн те пулин урăхларах, хăвăр майлă тума çирĕп шухăш пур пулсан, – тăвăр: эсир тĕрĕс, – тенĕ. – Анчах та ку чухне эсир чăннипех таса кăмăлпа çапла шухăшласан тата туйсан кăна тĕрĕс пулатăр. Çакă вăл, ман шутпа, искусствăри реализм. Добролюбов каларăш, художник-реалистăн «пурнăçăн вĕçекен пулăмне» тытса чармалла. Анчах тытса чарни пĕтĕмпех пĕлсе çитни мар-ха. Художникăн вăрттăнлăхне тупмалла, пытарăнчăк пружинине хыпаламалла, «кутне-пуçне» уçса хумалла. Вăйлă талантсен хăйне майлă ӳнерçĕлле ал сĕмĕ пур, тенĕ Добролюбов...»

Н.А.Римский-Корсаковăн «Летопись моей жизни» кĕнеки. Вуламалла! Р.-К. «Борис Годунов», «Хованщина», «Князь Игорь», «Каменный гость» çырнă. Тихвин хули – композитор çĕршывĕ.

Кăнна Кушки урамĕсем: Аслă урам, Арманкас, Вăтакас, Киштек касси, Масар кас, Çĕнĕ кас, Чечи кас, Кĕтес кас, Киштек çырли.

Вăл куйкăрăш. Унтан ернĕ кил питĕ чикĕсĕр пуйса каять тет. Анчах вăл вăрçа пĕртте юратмасть тет.

Куйкăрăш тени лăпкă çын тени пулать.

Çуркунне кукамай нумай пулсан, хуратул аван пулать тет.

Михаил Пришвин: Мана сахал пĕлеççĕ, вăтам писатель вырăнне те хумаççĕ. Манăн пултарулăх вăрлăхĕнчен пĕр йышши чечексем – кăвакарчăн куçĕсем юлаççĕ.

Ман умĕн мĕн каланă, эпĕ те çавнах калатăп. Кĕнеке çырасси вăрлăх тунипе пĕрех. Акма йывăр, пухма савăнăçлă. Çамрăклăха хăратаканни – ватлăх. Манăн ăна пĕртте çамрăклăхпа улăштарас килмест.

**Мартăн 16-мĕшĕ.** Вырсарни кун. Ирхине кутсăр-пуçсăр тăман. Шыв çук.

Конечно,
 различны поэтов сорта.



**Лутра мачча шухăшсене «тытса чарнă», вĕсене «сапаланса кайма паман». Астăватăп, атте шухăшĕсене чĕрĕ чунсем вырăннех хуратчĕ. Шухăшĕсене тытса чарса вăл вăйхăват пухнă, вăй-хăват пухса ăс-тăн пуçтарнă ĕнтĕ.**

**Атте хăйĕн пултарулăхне яланах «ĕç туни» тетчĕ. Чăн та, тĕлĕнмелле самант пулнă çакă: унăн пичĕ-куçĕ çиçсе çуталса каятчĕ. Вăл хăй ăшĕнче сăнарласа тунă асамлă тĕнчере чунĕпе те, чĕрипе те пурăнса çыратчĕ те çыратчĕ. Тата мĕнешкел киленӳпе ĕçленĕ! Ăшă çапатчĕ унран, ун йĕритавра хĕвеллĕ ачаш ăшă хумсем вылятчĕç. Çывăхра чухне çакă питĕ сисĕмлĕччĕ.**

У стольких поэтов
легкость руки!
Тянет,
как фокусник,
строчку изо рта.
И у себя
и у других.
Что говорить
о лирических кастратах?
Строчку
чужую
вырвет и рад.
Это
обычное
воровство и растраты
Среди деливших страну растрат.
. . . . . . . .
Поэзия –
вся! –
езда в незнаемое.

Çĕршыв тăрăх. Каласа панă тăрăх. Урлă?

Сетнерпе Нарспи пăлтăр пек пӳрт лартасшăн. Халăх юрри.

Мамăк тӳшек сармашкăн
Пĕчĕк пăлтăр кирлĕччĕ...

Пăяхам, старший деверь. Пăяхам – упăшкин пиччĕшĕ. Пăяхам арăмĕ – инке. Сентти.

Çĕнĕ çын та Нарспи кин
Пăрмаях вăл хуйхăрать.
Пăяхăшăн ачине
Сенттие çеç юратать.

«Лăпăр» – юмах. Шăпа, шăпана ĕненни. Турă çырнинчен иртеймĕн.

Пултăр – арăмăн шăллĕ. Пуçана. Пăяхам, сарă ывăл, кĕçĕн ывăл.

Патак – шатак. Арăмне хĕнеме кил картинче ун патак-шатакĕ çитет.

Патăрка. Патăрах хăтăлать. Хăвăрт татăлакан, хуçăлакан.

**Мартăн 17-мĕшĕ.** С.М.Ислюков çырăвĕ. Питĕ лайăх, çынла. Ман йытă та ман тус килсе кайрĕ, шăмăсене кышларĕ çеç, çисех ячĕ.

Ип.Иванов, В.Максимов, М.Ильин художник патне çырусем çыртăм.

Михаил Дудин калаçрĕ – хĕрӳ туйăмлă, кăшкăрашуллă.

Бижбуляк: вырăса ята ан кала, тутара киле ан кăтарт (авалхи ваттисен сăмахĕ). Интереслĕ.

Кивĕ Тимĕрçен: хĕрĕх чӳрече, пĕр алăк, харăс кĕресрен хăратăп.

Кăнна Кушки: Тилçе шывĕ. Чăпăрлă шывĕ хĕрринче. «Тилçе шывне çеç сутăн илместпĕр».

Тилче чирĕ, лаша пырĕ шăнсан.

Хасан Туфан арабла Çавра çил, Киремет ялĕ, 1900. Ашшĕ – кăмакаçă. Ĕпхӳ медресĕ. Галимджан Ибрагимов.

---

**Халĕ Карачра йывăç çурт çук ĕнтĕ. 1969 çулхи сентябрьте юратнă анне синкерлĕ вилĕмпе вилчĕ. Йывăр асаилӳсем капмар чулсем пек пусарчĕç пирĕн чĕресене. Çакнашкал лару-тăрура ялта тĕпленсе пурăнмашкăн та хал çитмерĕ. Атте аллисем те вĕçен кайăкăн хуçнă çуначĕсем пекех тăрук усăнса анчĕç. Тата вăл хуçалăх ĕçĕсене нихăçан та хутшăнман-çке-ха, ку тĕлĕшпе вăл нимĕн те ăнкарман. Çапла вара майĕпен-майĕпен ялти хуçалăх юхăнма пуçларĕ. Атте çĕр çинчен, унăн пулăхне ӳстересси çинчен çак ĕçе пĕлсе те хавхаланса питĕ нумай çырнă. Анчах пахчари ĕçсене пурнăçлама та унăн алли çитеймерĕ. Хуçисем пулман чухне ял çыннисем çурта пайăн-пайăн салатса пĕтерчĕç. Карачри çурт поэтшăн пултарулăх лабораторийĕ пулнă-çке-ха.**

**Халăх шухăш-кăмăлне лайăх ăнланни, унăн пурнăçне пĕлсе тăни, ку чухнехи чи кирлĕ ыйтусене хускатни Ухсай поэзине чĕрĕ вăй панă, ăнăçлă сăнарсем тума пулăшнă. Поэт тăван халăх умĕнче хăйне яланах парăмра пулнăн шутлать, халăх юратакан, унăн кăмăлне тивĕçтерекен паха хайлавсем çырма тăрăшать. Яланах халăхпа пĕрле, кирек хăçан та халăхшăн – акă мĕнле пулнă поэтăн ырă та çутă тĕллевĕ.**

**Ку дневник ытти дневниксенчен ытлашшипех уйрăлса тăрать. Кунта куллен-**

Омар Хайам, Маяковский. 1924 – Хусан, Хади Такташ. Традициллĕ сăвва çĕмĕрни. «Урал эскизĕсем». Çамрăк Маяковский витĕмĕ. Çав вăхăтра Туфан, Çавра çил пулать. Çуран утнă, вăхăтлăха ĕçе вырнаçнă. Ташкентра хăйĕн кĕнекине курнă. Ăна унăн юлташĕсем кăларнă. Фольклор, традицилĕх, Тукай патне таврăнни, Такташ вилĕмĕ.

«Çырусем пуласлăха кăна каяççĕ»* Тукайпа Пушкин ман карапăн хўрине килчĕç. М.Джалиль, Ахмед Файзи. «Алт» – «Клятва».

Амăшĕ курăксемпе, кайăксемпе, çăлтăрсемпе калаçма пĕлнĕ.

Пурнăçа философла ăнланса илни.

«Хăвасем те тутарла пĕлеççĕ пек».

Çуркунне

Курак пасарĕ – йĕркесĕр пуху, кашнин хăйĕн шухăшĕ. Сенкер уйăх – май.

**Мартăн 18-мĕшĕ.** Пустуй парне, кĕтмен парне, пурнăç, мĕншĕн мана панă сана?

СССР халăхĕсен поэчĕсем. Юрату йĕркисем. Максуд Шайзаде (узбек), Гафар Мирзоев (таджик), Тимеркул Уметалиев (киргиз), Леонид Вышеславский. Енчен те çивиттийĕ çук пулсан, çурчĕ унăн чунĕнче – Маро Маркарян.

Римский-Корсаков – «Невидимый град Китеж» – 14-мĕш опера. Премьера 1907 çулта. «Ылтăн автан».

«Хĕн-хур айĕнче» поэма. Элкер ăна тўрлетнĕ. Вырăс? Чăваш Вырăскасси сăмахĕсем. «Вырăс кайрĕ – вырăн юлчĕ». Словарь – «Вырăс». Элкер çапла вара хăй халăхран илнĕ сюжета пăсса тăкрĕ.

Асаилў – ку ăруран ăрăва пыракан эстафета. Тăнлă-пуçлă, тĕрĕс! Эпир апла çырмастпăр – Иванов çинчен те, Яковлев çинчен те.

**Мартăн 19-мĕшĕ.** Чĕкеç. Хăш-пĕр чухне хуйха сирес тесе вăл чĕлĕм туртнă, çавăнпа Кĕлпук ун çумне чĕлĕм хунă – чĕлĕм кун каçнă.

Пишпулек – хресчен лицейĕ.

Лаша чăваш чĕлхинче кастарнă иккенне пĕлтерет. Айтуррах лаша турăмăр теççĕ.

Кашлинч, кашлинчи, козловошник. Хурамал: çул хĕрринчи кашлинчи ан çийĕр, тутăр пăсăлĕ.

Кашкăр шăнăрĕ, волчье сухожилие. Япала çухалсан, кам çине те пулсанах кашкăр шăнăрĕ турттарсан, вăл çын вилет.

Çырусене эпĕ мăшăрлă мар числосенче çыратăп. Мăшăрлă мар число чăвашла «ытă», мăшăрли – «тĕкел».

---

**хи пултарулăх ĕçĕ çинчен сахал асăннă. Унсăр пуçне, ăна кĕскен те сапаланчăк çырнă. Дневнике çыру кĕнеки е çывăх вăхăтра пысăк хайлавсем çырма хатĕрленĕ ăслă шухăшсен пуххи теме те пулать пуль. Вĕсем, пĕрре пăхма, пĕр-пĕринпе пач çыхăнман пек, çав хушăрах поэтăн шалти тĕнчине, илемлĕх туйăмне уçса параççĕ. Çак йĕркесенче Яков Ухсайăн анлă тавра курăмĕ палăрать, вăл музыка, литература тата живопись çине мĕнле пăхни витĕр курăнать. Çырнисенчен чылайăшĕ асаилўсемпе литература ĕçĕнчи пулăмсемпе çыхăннă. Паллах, чăваш тĕнчине те ман-ман, хăш-пĕр сăмахсен пĕлтерĕшĕ пирки калаңă шухăшсем те тĕл пулаççĕ.**

**Çак пĕчĕкçĕ статьяра пĕтĕм дневнике тишкерсе тухма тĕллев лартман эпĕ. Ун çинчен тĕпчевçĕсем хăйсен сăмахне калĕç-ха. Манăн тĕллев вара атте çырнă йĕркесене май çитнĕ таран, хам пĕлнĕ чухлĕ ăнлантарса парасси пулса тăрать.**

**Чи малтанах тăван анне – Мария Дмитриевна Ухсай паллă куçаруçăн П.Д.Дружининăн арăмĕ Нина Михайловна патне çырнă çырури йĕркесемпе паллашта-**

**«Письма в грядущее». Х.Такташăн сăвăсен пуххи.*

Ача-пăча вăййинчи пек мăшăрсăр пулас килмест, мана арăм-çуррисĕр пуçне юлташ кирлĕ, хамăн çурри.

Пушкăртстан. Писательсен Союзĕнче 78 çын. Халăх поэчĕсем. 1. М.Гафури, Гилемдар Рамазанов, филологи наукисен докторĕ. Гафури районĕ. Тукай, Иванов. «Хĕрлĕ ялав» сб. (1919) 6 том.

2. Сайфи Кудаш – 4 том. Сăвăллă роман (1935). З.Р.Нигмати, поэт, драматург. «Маяковский маншăн маяк пулнă». «Большевик» поэма, «Хĕлхемрен çулăм» – Ленин çинчен. 4. М.Карим. 1935 çулта çырма пуçланă. Пахалăхпа çĕнелни. «Эпĕ – Раççей çынни». Чаплă драматург. Салават ячĕллĕ преми.

**Мартăн 20-мĕшĕ.** Модест Петрович Мусоргский 42 çулта вилнĕ. «Искусство – кĕрешӳре кăна. Манăн девиз: çĕнĕ çырансем патне талпăнар». 1. Борис Годунов. 2. Сорочинская ярмарка. 3. Хованщина.

**Мартăн 21-мĕшĕ.** Чăвашсен нигилизмĕ – чĕлхене, йăла-йĕркесене хисеплеменни, хăвăрт вырăсланса пыни, тăван çĕре курайманни. Акатуй уявне чарни. Эллен* «Акатуйне» питĕ вуламалла.

Ирина Петровна Яунзем – РСФСР халăх артистки. Тĕнчери 60 чĕлхепе юрăсем юрлать. «Вĕсен çĕрĕсем çинче пухнă чечексене эпĕ вĕсене паратăп». Мордвасен юрăçи Мария Антонова тата чăваш юррисем.

Якут, мордва, украин, туркмен, тутар, коми хĕрĕсем. Чăваш хĕрĕ. Вăл пулман. Ылханлă нигилизм, хăвăн нацине курайманни.

Мана атте калатчĕ: кĕпӳ-йĕмӳ çĕтĕк пулсан мăшкăл мар, чуну çеç çĕтĕк ан пултăр! Манăн сăхман çӳхе, мана, çумăр, хĕрхен!

Передача – Роберт Бернс. Çӳретĕп эпĕ хулара. Йывăççене чулпа хĕстернĕ. Пиллĕкмĕш ывăл çуралнă. Вăтăр иккĕре вилнĕ.

Радиопа еврей поэчĕсем сăвăсем вулаççĕ. Ку ахальтен мар, вырăнсенчи еврейсем хăйсем тăрăшнипе. Еврейсен туслăхĕ, пĕр-пĕрне ала парса пулăшасси питĕ вăйлă. Ырламалла.

Каллех Мусоргский! «Кураври картинкăсем».

Кикен – чемерица. Вăл улăхра ӳсет. Кӳршĕри хĕрарăм пирĕн килĕре кикен вăрри тӳнĕ йытта вĕлерме. Эпир пиччепе иксĕмĕр çав килĕрех çĕмĕрт тӳсе çинĕ. Чутах вилеттĕмĕр, сĕт ĕçсе ăна хăсса кăларни анчах пире çăлса хăварчĕ.

**Мартăн 22-мĕшĕ.** Тилпĕрен – беле-

---

**ратăп. «Яков ялта пурăнать, – хыпарланă вăл. – Унта мĕн ĕçлет вăл, çав пĕччен çĕ манах, ăна Турă çеç пĕлет: çыру та çырмасть, телефонпа та калаçмасть». Чăн та, атте ялта улах вырăнти пек пурăннă, пĕтĕм вăйне пултарулăх ĕçне панă. «Поэзисĕр ман пурнăç çук», – çырнă вăл хăйĕн дневникĕнче.**

**Ялти пурнăç нихăш енĕпе те пуян пулман. Атте ăна хак парса темиçе сăмах çеç çырнă: «Нимĕнле хыпар та çук. Кушак та эпĕ». (Апрелĕн 10-мĕшĕ.) Кушак аçи, Татарин ятлăскер, 1971-1972 çулсенчи дневниксенче те час-час тĕл пулать. Ытла вĕçкĕнскер çапăçма питĕ юратнă. Темиçе кун çухалса çӳресен çеç суранĕсене çулласа сиплемешкĕн атте пӳртне таврăннă кушак аçи.**

**Ялта ĕçлесен те Яков Гаврилович литература тĕнчинчен пĕртте уйрăлман, çывăх юлташĕсемпе тăтăшах çырусем çӳретнĕ. Пĕчĕкçĕ радиоприемникпе композиторсемпе художниксем çинчен паракан «Поэтическая тетрадь» передачăна юратса итленĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унăн дневникĕнче художниксем çинчен çырнисем ытларах тĕл пулаççĕ.**

---

***Элле Кузьма Васильевич (1886-1974) – историк, этнограф. Национализмпа айăпланине пула тăван республикăран тухса кайма тивнĕ.***

на. Тилпĕрен аврине çисен, этем тилĕрет (Ситекпуç).

Турпас пек урпинчен турăх пек сăра турăм.

Национальная элегантность и колоритность – интереслĕ сăмах çаврăнăшĕ.

Илемлĕ теççĕ Сингапур,

Анчах манăн хамăн ялăм пур.

М.Карим тухса калаçни – калама çук чаплă.

**Мартăн 23-мĕшĕ.** Вырсарни кун пулсан та манăн ĕç чăвашла пырать, çаплах ман чăваш эрни. Ирхине тăваттăра тăтăм. Стена çинчи градус[ник]ре $5^0$, кĕркунне, урайĕнче хĕлле, урана пусма çук сивĕ, кăмакара уяр, шăрăх. Эпĕ Долгова аса илтĕм. Вăл хайне питĕ ăслă шутлать, никамран та вĕренмест.

Чăваш çĕршывне мухтаса каласа паракан сăмах – статья.

Пигмейсем Африкăра. Конго юхан шывĕ. Пĕчĕкçĕ çын аманнă чĕр чуна йĕрлет. Вăл мĕн çиет, мĕнле курăксене? Пигмейсем – вăрман ачисем; чирчĕрпе, выçăпа вилеççĕ. Çӳллĕшĕ – 1,35 м. Пуçа тăхăнмалли – кайăксен тĕкĕсенчен. Камерун патшалăхĕ, пĕтĕмпе 50 пин.

«Тумра» – Лермонтов сăввинчи эпиграфран. «Виçĕ хĕлĕх тĕнкĕлтетнĕ».

Эпĕ утрăм шăллăмпа

Хамăр ялти пасара.

Тинкăл-тинкăл калама



**Çакна палăртмалла, кун кĕнекинчи пĕр сăмах та, пĕр йĕрке те ăнсăртран çырăнман, вĕсем пурте пултарулăх ĕçĕпе çыхăннă. Сăмахран, «Иван Сусанин» опера пирки çырнине илер-ха. Атте çав вăхăтра Константин Иванов çинчен вырăсла кĕнеке çырнă. Унăн темиçе страницине Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем Глинка оперине сцена çинче лартнине халаллан пулнă.**

**Литература тĕнчине илсен те атте хăй килĕштерсе сума сăвакан писательсемпе философсене питĕ уйăрса пăхнă. Гетене, Лукреције юратнă. Уншăн тема мар, пултарулăх вăйĕ чи кирли шутланнă. Халăхлăхпа витĕннине чăтма пултарайман, çыравçăсен тĕрлĕ шухăшлăхне пысăка хурса ырланă. Вăл Андрей Белый поэта хисепленĕ. Çавăн пекех вырăс поэчĕсенчен Александр Блокпа Николай Гумилева мухтаса асăннă. Вĕсене вăл ахальтен мар йăлтăрккасем тенĕ. Атте кирек мĕнле кĕнекере те ыттисем курманнине асăрхама пултаратчĕ, çĕрпе этем çыхăнăвĕсем пирки çырнă хайлавсене пĕтĕм чунĕпе çывăх йышăнатчĕ, хăй те çĕнĕлле сăмах калама тăрăшатчĕ.**

**Тепĕр хут калатăп, атте тăван çĕрпе çыхăннă поэзие чĕрĕ сисĕмпе туятчĕ. Унăн кĕнекисенче паллă тунă вырăнсем нумай. Вĕсем пĕлтерĕшлĕ, тен, ятарлă**

Виçĕ хĕлĕхлĕ тумра
Илсе патăм, ман студент
Тăрса юлнă укçапа.

**Урхамах**

Пĕрре калатăп эпĕ – пушкăрт,
Тепре калатăп – эп чăваш.
Вĕçетĕп пĕлĕтре, хăлат пекех,
Çул ман пулас тĕнчере.
Вĕç, урхамах, чăваш каларăш,
Çилхи витĕр çил вĕрет...

Ашмарин – Мăкшă касси Илепарта? Ун пек урам пур-и?

Лашасем. Тарланă хыççăн шыв ĕçтерсен мĕнпе чирлет, мĕн пулать?

Чăваш чĕлхинче пур япала та этем пек. Ыраш кĕпи, чĕре хăлхи, çăкăр кăвапи, турат куçĕ.

Маршак... ача çулĕсенченех вырăс çăлтăрĕсенчен пурин патĕнче те пулнă – Стасов, Толстой, Р.-Корсаков, Репин, Шаляпин, Горький – săввисене кăтартнă. ...Хайне чухăн çемьерен тет, тăватă çулта çырма пуçланă, латинларан Горацин одине куçарнă. ...Фольклорти ачасем хăйсене улăпсем пек, тĕнче хуçисем пек туяççĕ: «Çумăр, çумăр, чарăнсам», – тесе хушаççĕ.

Çут çанталăк тата ачасем. Амăшĕпе, тантăшĕпе калаçнă пек ирĕклĕ калаçаççĕ. Сентти пирки калаçнă пек.

**Мартăн 26-мĕшĕ.** Кăвак хуппи.

Çӳле пăхрăм, пĕшкĕнтĕм
Çĕлĕк пуçран ӳкнĕрен.
Шутларăм та тĕлĕнтĕм
Пурнăç хăвăрт иртнĕрен.
. . . . . .
Çӳл тӳпере çут çăлтăр
Пирĕн пичче мар-ши ку?

Туй такмакĕнчен.

«Кĕлпук» – ум сăмах. Тукташ статйи, Резюкова алă пустарни. Кĕлпук поэми вăрах вăхăт ӳссе пычĕ, çураласса вăл халăх ăс-тăнне итленипе çуралчĕ, ăна кĕтсе илекенсем: Макаров, Пеньковский, Чуковский, Костер, Роллан*. «Калевала». Юман 1934 çулта куçарма тытăнчĕ.

Чăваш поэчĕн ирхи юрри. Гете. Тупса вуламалла.

Французи комеди театрĕ – 300 çулта, армян опери – 100 çулта, Чăваш опера театрĕ пуçланнă та вырăсланнă.

Мулкач пек эпĕ пĕр пĕччен,
Мана хăрма çеç юлнă,
Манран ĕрчемĕ йăх.

Поэт çĕре варнă тырă, унăн тымарĕсем çĕр айĕнче, çулçисем сывлăшра. Çĕр айĕнче тĕттĕм, анчах унта хĕвел пайăркисем пуянлăх туса хатĕрлеççĕ.

---

**тĕпчев ĕçĕ çырма та тивĕçлĕ тесе шутлатăп. Тĕслĕхрен, Афанасий Фет сăввисен кĕнекине пăхар-ха. Шухăшласан, сăвăç хресчен пурнăçĕнчен катара тăнă, апла пулин те атте хăйĕн аллипе кĕнеке хĕррисене нумай асăрхаттару çырса хунă. Вăл ытларах анасене сăнланине, улăха кĕтӳ кăларнине тата ыт.те тишкернĕ.**

**Атте çыравçăсен пултарулăхне туйма пĕлетчĕ, хăш чĕлхепе çырнине пăхмасăр тивĕçлипе хак паратчĕ. Чăн-чăн поэта яланах пысăка хурса хаклатчĕ. Мордвасен çамрăк поэтне Иван Пиняева час-часах ырласа калаçнине астăватăп. Тутарсемпе пушкăртсен поэчĕсене питĕ юратса, тăванла йышăнатчĕ. Уйрăмах ăна Мажит Гафури, Хасан Туфан, Сейфи Кудаш çывăхчĕ.**

---

**И.Тукташпа (Тăван Атăл, 1952, 1№) Н.Резюков (Чăваш коммуни, 1951, октябрĕн 16-мĕшĕ) статйисем, вăтăрмĕш çулсен сывлăшĕпе çырнă. «Кĕлпук мучипе» унăн авторне пĕр сăлтавсăр хурласа тăкнă. «Кĕлпук кивĕ йăласене, кивĕ культурăна хӳтĕлет, поэтăн кăмăлĕ те ун енче», «Ку вăл писателĕн политикăлла йăнăшĕ, тимсĕрлĕхĕ», «Çакăн пек апшурла поэзи паянхи куна нимĕн тума та кирлĕ мар» – çакнашкал шухăшсемпе тултарнă ку статьясене. А.Н.Макаров критик, М.М.Пеньковскипе Н.К.Чуковский куçаруçăсем вара «Кĕлпук мучи» поэмăна тивĕçлипе хакланă.*

*Костерпа Ролланăн романĕсен тĕп геройĕсем Кĕлпук мучине çывăх пулнăран авторсене асăннă.*

Этем хăйĕншĕн çеç пурăнни, «хам çием те хам сысам» текен шухăш. Мĕнле уйрăмлăх: этем? çын?

«Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен». Ют çын. Ют этем? Кун пирки шухăшламалла. Ленин этем-и, çын-и? Вăрă этем-и?

**Мартăн 27-мĕшĕ.** Паян ирех виçĕ сехетре сиксе тăтăм та пӳрт хутса ятăм. Пĕр пански чăлхана шыраса кун тухрĕ. Каçхине çывăрма выртнă чух (вырăн сивĕ) пĕр урана чăлха тăхăннă иккен. Пуç алă мĕн тунине пĕлмест, ывăннă.

Тайăр Тимкки «Интернационал» куçарнине «Чăваш çĕршывĕ» сăвва кĕртмелле.

Вороновский, Твардовский, Кондратович, Старшинов, Кузнецова, Елена патне çырусем çыртăм.

Эсир мана шел мар, манăн çурхи çулсем...

**Мартăн 28-мĕшĕ.** Ёнер çырусем анчах çыртăм, пилĕк сехетрех çывăрма выртрăм. Паян ĕçлес тесе пĕрре вăрантăм. Кăмака хутса пултарнă хыççăн урама тухрăм, çĕлĕк тăхăннăччĕ. Сивĕ иккен, каялла хăвăрт кĕтĕм... Ислюков патне çырнине ямарăм, çилленсе çырсан ăс çухалать, сапаланать. Çилĕ килнĕ чух шухăшлани юрăхсăр, усал иккен, йăнăштарма, çынсене те çиллентерме пултарать.

Çитмен пурнăç пирки-çке
Çын куçĕнчен пăхатпăр.
Çиме çăкăр çитмесен,
Пăтавка йатса тухатпăр.
Хырăç-марăç памашкăн
Хушпу саклат хыватпăр. Саклат?

Чăваш кил-йышĕнче ача хăйĕнчен аслисене ятпа чĕнмен: пичче, аппа, кĕçĕн пичче.

Словарьти сăмахсем хăвăрт улшăнаççĕ. XIX ĕмĕрте «Каникулы» вырăнне «вакация» йышăннă. Латинла vacatsio – пушă вăхăт...

Автобиографи. Ун чухне радио та, хаçат-журнал та çукчĕ. Эпĕ вырăсла пĕлместĕмччĕ. Хамăр ялта пилĕк çĕр киле яхăн пулсан та, пур ача-пăчана та пĕлеттĕм. Ку манăн географиччĕ, манăн глобус, манăн астрономи. Çăлтăрсенчен пĕрне анчах пĕлеттĕм. Хушка çăлтăр. Сехет те çук – шурăмпуç çăлтăрĕ.

«Чĕкеç инке». Хĕр çураçнă чухне яшка пĕçереççĕ те, ăна вара хĕр яшки теççĕ.

Хĕр яшки çинĕ чух хĕрсем пĕр пăлхатмасăр çиеççĕ. Пăлхатса сыпсан, качча кайнă çĕрте пăлхатса пурăнмалла пулать тет.

---

**Чăваш çыравçисенчен Илпек Микулайне, Владимир Садая, Александр Артемьева, Алексей Воробьева палăртатчĕ. Илпекĕн пуян чĕлхи çинчен, ăна вăл питĕ аслă амăшĕнчен вĕренсе ӳсни çинчен каласа кăтартатчĕ. Артемьевăн сăнарлă чĕлхине мухтатчĕ, Садая чи ăста прозаиксен шутне кĕртетчĕ. Алексей Воробьева хăйĕн поззинчи талантне уçса çитерейместерех çут тĕнчерен çамрăклах уйрăлни çинчен аса илетчĕ.**

**Кун кĕнекинче музыка çинчен, композиторсем çинчен сахал мар çырнă. Тӳрех калатăп, атте пек музыкăна юратакан çынна пурнăçра сайра пĕрре çеç тĕл пулатăн. Вăл хăйне халăх юрри-кĕвви, классика, эстрада... ресторан юрри-çеммисем – пурте-пурте килĕшни çинчен каласа паратчĕ. Музыка тĕлĕшпе вăл хăйне майлă пантеист* пулнă. Сасăсен тĕнчине атте çил куçăмĕ евĕр е кун çутипе каç ылмашăвĕ пек чуна уçăлтаракан хăватлă вăй тесе йышăнатчĕ.**

**Вăл музыкăна юратни пирĕн пурнăçри туслăха çирĕплетме те питĕ пулăшнă.**

---

***Çут çанталăкпа турă пĕр текен вĕренĕве пăхăнакан çын.***